### Вырӑнти самоуправлени ыйтӑвĕсемпе

# Икĕ еншĕн те усӑллӑ тĕл пулусем

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Уйкас Янасал ял тӑрӑхĕн пуçлӑхне В.И. Егорова бюджет укçи-тенкипе тĕллевлĕ те пĕлсе усӑ курасси шухӑшлаттарать. Кӑçал вӑл 2700 пин тенкĕпе танлашнӑ пулсан, çитес çул валли 3 миллион тенкĕ палӑртнӑ. Ялсем патне асфальт çулсем тӑвас ыйтӑва татса панӑ, ытларах ялсенче те çулсем йĕркеллĕ пулин те, бюджет укçи-тенки мĕн шутланине тума çитменни паллӑ. Ку тĕлĕшпе вĕрентӳпе культура центрĕсем йĕркелени те – вӑхӑт ыйтӑвĕ.

Вырӑнти Ильич яч. хис. ял хуçалӑх производство кооперативĕн ертӳçи, депутатсен районти Пухӑвĕн председателĕ И.В. Николаев хуçалӑхри ĕçсемпе паллаштарнӑ май çавна палӑртрĕ. Чылай çĕрте йывӑрлӑхсем тесе хуçалӑхсене панкрута кӑларнӑ, пур-çук техникипе ыттине салатса пĕтернĕ пулсан, Уйкас Янасалсем 1990-мĕш çулсем тĕлне мĕн пулнине сыхласа хӑварма пултарнӑ. Производство та, ĕç вырӑнĕсем те пур. Çулталӑк итогĕсемпе кашни ĕне пуçне вӑтамран сĕт сӑвассине 4800 килограма çитерме палӑртаççĕ. Хуçалӑхĕпе ĕç укçин шайĕ уйӑхне вӑтамран 4000–4200 тенкĕпе танлашать пулсан, дояркӑсем хушшинче акӑ 8–10 пин тенкĕ илекенсем те çук мар.

Мӑн Сĕнтĕр ял тӑрӑхĕн администрацийĕн ĕçĕ те хӑнасемшĕн тĕслĕхлĕ пулчĕ. Хальлĕхе Чулхуласемшĕн пĕчĕкрех ял тӑрӑхĕсене пĕрпĕринпе пĕрлештерес, ялсенче йĕркеллĕ çулсем тӑвас, газ кĕртес ыйтусем çивĕч тӑраççĕ пулсан, Мӑн Сĕнтĕрсемшĕн ку вӑл, ял тӑрӑхĕн пуçлӑхĕ Г.П. Мазиков палӑртнӑ тӑрӑх, иртнĕ тапхӑр.

Ял тӑрӑхĕ районта чи пысӑккисенчен пĕри. Унӑн территорийĕ 7012,4 гектар йышӑнать, унта 19 ял кĕрет, 3600 çын пурӑнать. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вӑтам тата тĕп шкулсем, «Рассвет» агрофирма, «Сундырь-Хлеб» общество, пурӑнмалли çурт-йĕрпе коммуналлӑ хуçалӑх предприятийĕ, иккĕмĕш номерлĕ район больници, Культура çурчĕпе ялти 4 клуб, Çветуй Троицӑн 2 православи чиркĕвĕ, ача сачĕсемпе пĕчĕк предпринимательство предприятийĕсем, хресчен (фермер) хуçалӑхĕсем т. ыт. те пур. Хӑй вӑхӑтĕнче ял тӑрӑхне Мӑн Хураçка ял тӑрӑхĕпе пĕрлештерсе йĕркеленĕ. Ял тӑрӑхĕн пуçлӑхĕ суеçтерсе каламасть, кун пек пысӑк ял тӑрӑхĕн пуçлӑхĕн тивĕçĕсене пурнӑçласа пыма çӑмӑлах мар пулин те, пĕр енчен ку экономи тĕлĕшпе те усӑ парать. Калӑпӑр, икĕ ял тӑрӑхне пĕрлештернĕ май администраци аппаратне пĕр çын кӑна хушӑннӑ. Тепĕр енчен тата халĕ пысӑкрах ыйтусене те татса пама майсем ытларах. Пĕтĕм укçана икĕ-виçĕ çĕре пайласа пĕтериччен пĕр çул пĕр ялта, тепĕр çул тепринче пысӑкрах ĕçсене пурнӑçлама пулать. Çулсем тӑвассине е шыв ыйтӑвне илес пулсан та.

Мӑн Сĕнтĕрте унччен чиркӳ те, Культура çурчĕ те пĕр çуртрах вырнаçнӑ пулни пирки пĕлетпĕр. Çамрӑксем валли унччен пуçламӑш шкул пулнӑ çурта юсаса кану центрĕ йĕркелени те пĕрремĕш çул мар. Хӑнасене вара унти лару-тӑру питĕ кӑмӑла кайрĕ. Кунтах тĕслĕх библиотека ĕçлет, «Картина» вокалпа инструментсен эстрада ансамблĕн студийĕ те пур, «Янаш» юрӑпа ташӑ халӑх ансамблĕ те çакӑнтах вырӑн тупнӑ. Сӑмах май, «Янаш» ансамбль кану центрĕсен республика конкурсĕнче иртнĕ çул иккĕмĕш вырӑна тухма пултарнӑ, уншӑн тивĕçнĕ 100 пин тенкĕпе музыка инструменчĕсене самай çĕнетсе пуянлатнӑ.

Геннадий Петровича лӑпкӑ чунлӑ çын тесе калаймӑн. Тĕл пулу вӑхӑтĕнче те вӑл вырӑнти лару-тӑрупа паллаштарнӑ, хӑнасен чылай ыйтӑвĕсем çине хуравланӑ май хӑй те вĕсенчен ыйтса пĕлме тӑрӑшрĕ, кӳршĕ республикӑри Спасски районĕнчи ĕçтешĕсем ку е вӑл ыйтӑва епле татса панипе интересленчĕ. Ку çапла пулмалла та ĕнтĕ. Тĕл пулусем, пĕрпĕрин опычĕпе паллашасси ячĕшĕн пулмалла мар вĕтха. Никамӑн та пĕтĕмпех лайӑх е пĕтĕмпех япӑх пулма пултараймасть. Лайӑх ĕçлекенĕн те çитменлĕхсем, туса çитерейменнисем, япӑхрах ĕçлекенрен те курмалливĕренмелли çук мар. Çавӑнпа та çак тĕл пулу, пĕр-пĕрин опычĕпе паллашни, Муркашсемшĕн те, хӑнасемшĕн те усӑллӑ пулчĕ тесе палӑртнӑ пулӑттӑм.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

### Партисен пурнӑçĕнчен

# Съезд анлӑ задачӑсем палӑртрĕ

***Ноябрĕн 20-мĕшĕнче «Единая Россия» парти съезчĕ иртрĕ. Нумаях пулмасть вара партин районти политканашĕн ларӑвĕ пулчĕ. Çавна май район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрӑмĕн политканашĕн секретарĕпе А.Н. ИВАНОВПА тĕл пулнӑ, вулакансене интереслентерекен хӑш-пĕр ыйтусем çине хуравлама ыйтнӑ.***

**– Альберт Николаевич, съезд ĕçĕхĕлĕпе эпир телевиденипе те, центрти хаçатсем урлӑ та паллашма пултартӑмӑр. Политканаш ларӑвĕнче мĕнле ыйтусене хускатрӑр-ха?**

– Чи малтанах съезд итогĕсене пӑхса тухрӑмӑр, хальхи лару-тӑрӑва хак патӑмӑр, малашлӑхри задачӑсене уçӑмлатрӑмӑр.

Съездӑн тĕп теми – çĕр-шыва 2020 çулчченхи тапхӑрта аталантармалли концепци. Тĕнче кризисне пӑхмасӑрах съезд малалла тӑнӑç аталанас задача лартать. Парти председателĕ В.В. Путин çапла каларĕ: «Эпир хамӑрӑн стратегиллĕ задачӑсене пӑрахӑçлама шутламастпӑр».

Политканаш ларӑвĕнче пирĕн ку задачӑсене район шайĕнче мĕнле пурнӑçламалли пирки сӑмах пычĕ. Эпир питех ырӑ вӑхӑтсем килсе тухманнине аван ӑнланатпӑр. Апла пулин те алӑ усса лармалла тесе шутламастпӑр. Паллӑ ĕнтĕ, патшалӑх малашне пĕчĕк ĕç укçиллĕ çынсене, ял хуçалӑх предприятийĕсене, шкулсемпе больницӑсене епле майпа пулӑшма май çитересси чылайӑшне хумхантарать.

Съездра ĕç тухӑçлӑхне 3–4 хут ӳстерме, тӑкаксене вара 40 процент таран чакарма кирли пирки те калаçрĕç. Ку вӑл районшӑн пĕчĕк проблема мар çав. Муркашра та, Мӑн Сĕнтĕрте те çĕнĕ предприятисем йĕркелемесĕр, вĕсене укçа-тенкĕ хывмасӑр, предприятисене тулли хӑватпа ĕçлеттерме тытӑнмасӑр лав вырӑнтан тапранмĕ.

Хальлĕхе ял хуçалӑх предприятийĕсенче харпӑрлӑх ыйтӑвне татса паман пирки кам та пулин унта укçа-тенкĕ хывассине шанма йывӑр. Хальхи менеджерсем, производствӑна йĕркелеме пĕлекенсем кирлĕ. Вĕсем вара харпӑрлӑх хуçи, инвесторсем пулсан кӑна килĕç.

Пурӑнмалли çурт-йĕр туяннӑ е тунӑ чухне çынсем тупӑшран тӳленĕ налук суммине патшалӑх каялла тавӑрса парассин виçине ӳстерме сĕннине районта анлӑн сӳтсе яваççĕ. Ку çӑмӑллӑхсен ыйтӑвĕпе эпир налук инспекцийĕпе те çыхӑнса пӑхрӑмӑр. Ӑнлантарса панине çывӑх вӑхӑтрах хаçат редакцине çитерсе парӑпӑр.

**– Съезд парти Уставне улшӑнусем кĕртрĕ. Мĕнпе çыхӑннӑ вĕсем?**

– Чи малтанах вĕсем Устава йышӑнӑранпа пурнӑçа кĕнĕ саккунсемпе çыхӑннӑ. Малашне партин пуçламӑш, район тата республика шайĕнчи секретарĕсем çак должноçе икĕ срокран ытла йышӑнма пултараймаççĕ. Иккĕмĕшĕнчен, партие илес пулсан çын парти майлисен ретĕнче 6 уйӑх пулни кирлĕ. Кайран вӑл партие кĕрессине парти майлисен канашĕ татса парать. Виççĕмĕшĕнчен тата взнос тӳлесси обязательнӑй мар, ирĕклĕ пулать. Тĕрĕслевпе ревизи комиссийĕсем пирки калакан положенире те улшӑнусем пур.

**– «Единая Россия» тата аграри партийĕсем пĕрлешрĕç. Районта ку ĕç мĕнле пулса пычĕ?**

– 2 уйӑх хушшинче политканаш членĕсем, районти организаци активĕ пур пуçламӑш организацисенче пулчĕç, аграри партийĕн членĕсемпе тĕл пулчĕç. 380 аграрник «Единая Россия» парти ретне тӑчĕ. Ытларахӑшĕ вĕсенчен ял хуçалӑх ĕçченĕсем, специалистсем. «Моргаушская» чӑх-чĕп фабрикинче, «Ударник» хуçалӑхра ку ĕç аван пулса пычĕ.

Çавна та палӑртса хӑварнӑ пулӑттӑм. Юлашки уйӑхсенче партие кĕрес шухӑшлисен йышĕ ӳссе пырать. Ноябрь уйӑхĕнче кӑна кун пек заявленисем 136 пулчĕç. Çак вӑхӑта вара «Единая Россия» партин пуçламӑш 24 уйрӑмĕнче 1236 член шутланать.

**– Партин пуçламӑш уйрӑмĕсен ĕçĕ, вĕсен задачисем пирки мĕн калас тетĕр?**

– Политканаш пуçламӑш звеносенче пуринче те съезд итогĕсемпе декабрь уйӑхĕнче пухусем ирттерме йышӑнчĕ. Политканаш членĕсене çирĕплетсе тухнӑ, вĕсене кирлĕ материалсемпе тивĕçтернĕ. Ку пухусем активлӑ иртчĕр тесе тӑрӑшмалла, унта парти членĕсемпе пĕрлех предприятисемпе организацисен ертӳçисене те явӑçтармалла, вырӑнсенчи лару-тӑрӑва хак памалла, умри задачӑсене пĕрле татса памалли çул-йĕре палӑртмалла.

### Шкулсенчен хыпарлаççĕ

# Математика вӑййи иртрĕ



Ачасен ӑс-тӑнне аталантарас, пĕр-пĕрин хушшинчи туслӑхне ӳстерес тĕллевпе Турай шкулĕн математика учительници З.П. Григорьева вĕренекенсемпе «Мĕн? Ӑçта? Хӑçан?» темӑпа математика вӑййи ирттерчĕ. Ӑна электронлӑ презентаци мелĕпе йĕркелерĕç.

Залра пĕтĕмпех математика хаçачĕсемпе плакатсем вырнаçтарса тухнӑ, командӑсен сĕтелĕ çинче секторсем çине пайланӑ ункӑ, вĕсенче ыйтусем чикнĕ конвертсем, пĕр минутлӑх хӑйӑр сехечĕсем, волчок.

З.П. Григорьева вӑйӑ правилисемпе паллаштарнӑ хыççӑн 8, 9, 10, 11-мĕш классенче вĕренекенсем хушшинче хĕрӳ кĕрешӳ пуçланчĕ. Пурте тĕрĕс ответсем пама тӑрӑшрĕç.

11 раунд хыççӑн 8-мĕш класс команди 1-мĕш вырӑна тухни паллӑ пулчĕ (капитанĕ – И. Яникова). 2-мĕш вырӑна 11-мĕш класс йышӑнчĕ (капитанĕ – С. Быркин). 3-мĕш вырӑн иккĕ пулчĕ, вĕсене 9-мĕшсемпе (капитанĕ – Е. Хрисанова) 10-мĕшсем (капитанĕ – О. Михайлова) пайларĕç.

Хыççӑн вара З.П. Григорьева пултарулӑхпа палӑрнисене саламларĕ, ӑнăçусем сунчĕ. Ку вӑйӑпа пурте кӑмӑллӑ юлчĕç.

**В. ИВАНОВ.**

**Сӑн ӳкерчĕкре: кам тĕрĕсрех хурав пама пултарĕ?**

### Официально

**Чувашская Республика**
**Моргаушское районное Собрание депутатов**
**РЕШЕНИЕ**
**27.11.2008г. № С-29/1**
**село Моргауши**

**Об утверждении платы за содержание и ремонт жилого помещения на 2009 год**

В соответствии с требованиями раздела VII Жилищного Кодекса Российской Федерации, Федеральным законом № 131-ФЗ от 06.10.2003 г. «Об общих принципах организации местного самоуправления в РФ» и протоколом заседания комиссии для проведения экспертизы изменения платы за ремонт и содержание жилого помещения ( в т.ч. вывоз и утилизация твердых бытовых отходов) для населения Моргаушского района от 15 октября 2008 года

Моргаушское районное Собрание депутатов **р е ш и л о**:

1. Утвердить и ввести с 1 января 2009 года:

1.1 Плату за содержание и ремонт жилого помещения, включающую в себя плату за услуги и работы по управлению многоквартирным домом, содержанию и текущему ремонту общего имущества в многоквартирном доме для нанимателей, занимающих жилые помещения по договорам социального найма и договорам найма жилого помещения муниципального жилищного фонда (Приложение 1)

1.2 Тарифы для предприятий и организаций, оказывающих услуги по вывозу и утилизации твердых бытовых отходов населению, проживающих в муниципальном жилищном фонде Моргаушского района (Приложение 2).

2.Рекомендовать собственникам жилых помещений ввести плату за содержание и ремонт жилого помещения на уровне размера платы для нанимателей, занимающих жилые помещения по договорам социального найма и договорам найма жилого помещения муниципального жилищного фонда Моргаушского района.

3. Признать утратившим силу пункты 1 и 3 Решения Моргаушского районного Собрания депутатов от 30.11.2007г. №С-22/5 «Об утверждении платы за содержание и ремонт жилого помещения на 2008 год».

4. Контроль за выполнением настоящего решения возложить на отдел экономики администрации Моргаушского района.

5. Настоящее решение вступает в силу после официального опубликования в районной газете «Знамя победы».

**Глава Моргаушского района**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

Приложение 1
к решению Моргаушского районного Собрания депутатов
от 27 ноября 2008г. № С-29/1

**ПЛАТА**

**за содержание и ремонт жилого помещения, включающая в себя плату за услуги и работы по управлению многоквартирным домом, содержанию и текущему ремонту общего имущества в многоквартирном доме для нанимателей, занимающих жилые помещения по договорам социального найма и договорам найма жилого помещения муниципального жилищного фонда Моргаушского района (за 1 кв.м. общей площади в месяц, в рублях)**

| № п/п | Типы жилищного фонда | Плата |
|---|---|---|
| 1 | Жилые дома со всеми удобствами | 7,68 |
| 2 | Жилые дома с частичными удобствами | 7,30 |
| 3 | Неблагоустроенные жилые дома | 6,41 |

Приложение 2
к решению Моргаушского районного Собрания депутатов
от 27 ноября 2008г. № С-29/1

**ТАРИФЫ**

**для предприятий и организаций, оказывающих услуги по вывозу и утилизации твердых бытовых отходов населению, проживающему в муниципальном жилищном фонде Моргаушского района**

руб. за 1 куб. м

| № № п.п | | Население |
|---|---|---|
| 1. | Тариф за вывоз твердых бытовых отходов с объектов жилищного фонда | 99,10 |
| 2. | Тариф за утилизацию твердых бытовых отходов с объектов жилищного фонда | 51,66 |

Примечание: Плата и тарифы установлены без дополнительного предъявления НДС.

**Чувашская Республика**
**Глава администрации Моргаушского района**
**ПОСТАНОВЛЕНИЕ**
**8. 12. 2008 г. № 690**
**с. Моргауши**

**Об установлении тарифов на услуги водоснабжения и водоотведения, оказываемые потребителям муниципальным унитарным предприятием жилищно-коммунального хозяйства «Моргаушское» Моргаушского района**

В соответствии с Жилищным Кодексом Российской Федерации, Федеральными законами №210-ФЗ от 30.12.2004г. «Об основах регулирования тарифов организаций коммунального комплекса», 131-ФЗ от 06.10.2003 г. «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», постановлением Правительства Российской Федерации от 23.05.2006 г. №307 «О порядке предоставления коммунальных услуг гражданам» и с протоколом заседания комиссии для проведения экспертизы изменения тарифов на услуги водоснабжения и водоотведения, оказываемые потребителям МУП ЖКХ «Моргаушское», платы за ремонт и содержание жилого помещения (в т.ч. вывоз и утилизация твердых бытовых отходов) для населения Моргаушского района на 2009 год от 15.10.2008 года, решениями Моргаушского районного Собрания депутатов от 31 октября 2006 г. № С-13/8 «О положении о порядке регулирования тарифов и надбавок на товары и услуги организаций коммунального комплекса Моргаушского района» и от 31 октября 2006 г. №С-13/9 «О положении о порядке регулирования тарифов на жилищно-коммунальные услуги для граждан Моргаушского района»

**п о с т а н о в л я ю**:

1. Установить тарифы на услуги водоснабжения и водоотведения, оказываемые потребителям муниципальным унитарным предприятием жилищно-коммунального хозяйства «Моргаушское» в следующих размерах:

- водоснабжение – 8 руб. 87 коп. за 1 куб.м (без дополнительного предъявления НДС);
- водоотведение - 16 руб. 49 коп. за 1 куб.м ( без дополнительного предъявления НДС).

2. Изменение тарифов по оплате жилищно-коммунальных услуг в сторону увеличения осуществлять с одновременным применением мер социальной защиты граждан в виде предоставления им субсидий на оплату жилья и коммунальных услуг.

3. Признать утратившим силу Постановление Главы администрации Моргаушского района от 23.11.2007 г. №542 «Об установлении тарифов на услуги водоснабжения и водоотведения, оказываемые потребителям муниципальным унитарным предприятием жилищно-коммунального хозяйства «Моргаушское» Моргаушского района».

4. Настоящее постановление вступает в силу с 1 января 2009 года.

5. Настоящее постановление подлежит опубликованию в районной газете «Знамя победы».

**Глава администрации Моргаушского района**
**Ю. А. ИВАНОВ.**